25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 24 КĔÇНЕРНИКУН 223 (6158) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МТС-сен Политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыраканосен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Вăрмар МТС-ĕ тăрăх:

98. **Комбайнер П. Захаров юлташ.** Вăл хăйĕн комбайнĕпе календарлă 20 кун хушшинче 225 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, планра 110 гектар кăтартнă пулнă.

99. **Комбайнер Г. Ашмарин юлташ.** Вăл хăйĕн комбайнĕпе календарлă 20 кун хушшинче 230 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, планра 110 гектар кăтартнă пулнă.

100. **Комбайнер И. Ланин юлташ.** Вăл хăйĕн комбайнĕпе календарлă 20 кун хушшинче 200 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, планра 110 гектар кăтартнă пулнă.

Отечественнăй вăрçăра аманнă çынсемшĕн куллен тăрăшар

Пирĕн çулпуç, аслă полководец Сталин юлташ 1928 çултах, «Хĕрлĕ Çарăн виçĕ уйăрăмлăхĕ çинчен» каланă сăмахра çакна палăртнăччĕ: «Халăх пирĕн патăрта çара юратнă пек, çаршăн тăрăшнă пек тĕнчере урăх нисăта та тăрăшмассĕ. Пирĕн патăрта çара юратаççĕ, ăна хисеплеççĕ, уншăн тăрăшаççĕ».

Совет халăхĕ хăйĕн çарĕшĕн тăрăшать. Çавăнпа пĕрле пирĕн патăрта вăрçă инваличĕсемшĕн те тăрăшаççĕ. Совет правительстви «Отечественнăй вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарасси çинчен» постановлени йышăнни совет çĕршывĕ инвалидсене ĕç пама, вĕсенчен обществăна усă кÿрекен çынсем тума тăрăшни пулать.

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан хаяр вăрçăра аманнисем те пулаççĕ. Вĕсене пирĕн госпитальсенче сиплеççĕ. Вĕсене строя тăма юрăхлă пулма пулăшаççĕ. Госпитальсенче сипленипе юсанса çитнĕ совет воинĕсем нумайĕшĕ каллех Хĕрлĕ Çар ретне тăраççĕ. Анчах пирĕн йывăр аманнисем те пур. Вĕсем сураннанччен хăйсем туса тăнă ĕçе таврăнма пултараймаççĕ. Вĕсемшĕн совет государствин тата мĕнпур совет халăхĕн тăрăшас пулать.

Пирĕн çĕршывра вăрçă инваличĕсене пенси параççĕ. Вĕсем вăй çитнĕ таран фабрикăсенче, заводсенче, колхозсенче, совет учрежденийĕсенче ĕçлеме пултараççĕ. Вĕсен аслă шкулсенче укçа тÿлемесĕр вĕренме право пур, вĕсене стипенди параççĕ. Сывлăхра улшăну пулнă пирки хăйсен малтанхи ĕçне туса тăма пултарайман инвалидсене çĕнĕ профессисем туянма пулăшаççĕ. Сăмахран, пирĕн республикăри госпитальсенчен пĕринче инвалидсене счетоводсем пулса ĕçлеме вĕрентекен курс, тепĕр госпитальре — атă-пушмак çĕлеме вĕрентекен мастерской уçнă. Чăваш АССР-ĕнчи Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариачĕ отечественнăй вăрçă инваличĕсене предприятисенчи, учрежденисенчи тата колхозсенчи бухгалтерсемпе счетоводсем пулса ĕçлеме вĕрентмешкĕн курс уçнă. Çак курсран 23 çын вĕренсе тухаççĕ. Кун пек курссемпе мастерскойсем татах та пур.

Çапла вара, пирĕн патăрта инвалидсем обществăна усăллă ĕçе туса тăма таврăнаççĕ. Фронтран аманса таврăннисем чылайĕшĕ халĕ предприятисенче, учрежденисенче тăрăшса ĕçлеççĕ. Пирĕн республикăра колхозсен председателĕсем пулса ĕçлекен инвалидсем 30 çын ытла. Пĕр Çĕрпÿ районĕнче кăна колхоз председателĕнче 3 инвалид ĕçлет. Хĕрлĕ Çарта старшина пулнă Семошкин юлташ госпитальре чухне счетовод ĕçне вĕреннĕ. Халĕ вăл хăйĕн тăван ялне—Çĕрпÿ районĕнчи Ивановăна таврăннă та çĕнĕ ăсталăх уншăн усăллă пулнă. Колхозсене таврăннă хыççăн счетоводсем, ферма заведующийĕсем пулса ĕçлеме инвалидсене тылла йĕшне уйăрса лартнă. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене юратса туса пыраççĕ.

Пирĕн çĕршывра инвалидсене валли пур енчен те çул уçă. Çĕвĕçĕ, счетоводсем, киномеханиксем, телеграфистсем, фотографсем, экономистсем; агрономсем, пахчаçсем, хурт-хăмăр ăстаçисем, токарьсем, слесарьсем пулма тата ытти ăсталăхсене те вĕренме вĕсене условисем туса параççĕ, вĕсене хватерсем тупса пама тăрăшаççĕ. Тимлесе вĕренсен, кашни инвалидах пĕр-пĕр специальность туянма пултарĕ. Кашни инвалидах хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран тăрăшса ĕçлесе обществăна усăллă ĕç туса тăрĕ. Социальнăй обеспечени оргăнĕсем çине партипе правительство пысăк ĕç хунă, вĕсен инвалидсене сывалма, протезсем туянассинче, ĕçе вырнаçтарассинче пулăшмалла. ЧАССР Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариачĕ Канашра протезнăй мастерской уçнă. Унта сентябрĕн 1-мĕшĕччен 75 протез туса хатĕрленĕ.

Анчах час-часах тата çакăн пек те пулать: инвалид госпитальре выртнă чухне уншăн врачсем, сестрасем хытă тăрăшаççĕ, ăна сиплеççĕ, юсама тăрăшаççĕ. Госпитальрен тухсан вара ăна пулăшакан çук. Инвалидсене ăсталăха вĕрентес ĕçе пирĕн республикăри сывлăха упрас ĕçĕн оргăнĕсемпе социальнăй обеспечени оргăнĕсем кирлĕ пек йĕркелесе çитермен-ха. Сăмахран, сывлăха упрас ĕçĕн комиссариатĕнче вара хăш госпитальре аманнисем валли мĕнле курс, мĕнле мастерской уçнине никам та пĕлмест. Çакăнтан ĕнтĕ пирĕн республикăри социальнăй обеспечени тата сывлăха упрас ĕçĕн оргăнĕсен отечественнăй вăрçă инваличĕсене ăсталăха вĕрентес ĕçе халех йĕркелесе яма кирли курăнать.

Вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарасси çине ытларах çаврăнса пăхас пулать. Кашни инвалид хăй тума пултаракан ĕçе кĕтĕр, унăн ĕç укçипе государствăран илекен пенси вăл Хĕрлĕ Çара каяччен илсе тăнă ĕç укçинчен кая мар пултăр.

Инвалидсене куллен кирлĕ апат-çимĕçсемпе япаласене туянма пулăшмалла. Ку тĕлĕшпе Мускавра тата ытти хуласенче ятарласа инвалидсем валли столовăйсем тата магазинсем уçнă. Пирĕн патăрта та çавăн пек тума пулать. Ку енĕпе сутă-илĕ организацийĕсем ытларах тăрăшни кирлĕ. Инвалид апат-çимĕçсене туянма хăй кайса çÿреме пултараймасть пулсан, комсомолецсен, пионерсен, килхуçи хĕрарăмĕсен ăна пулăшас пулать.

Отечественнăй вăрçă инваличĕсемшĕн тăрăшасси — пирĕн обязанность. Çакна пирĕн пурин те лайăх ăнланса илес пулать. Тăван çĕршывшăн çапăçса юн тăкнă çыншăн тăрăшни пархатарлă ĕç пулса тăнине пурин те асра тытмалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ф. Т. Семенов юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Федор Тимофеевич **Семенов** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти сентябрĕн 23-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

И. И. Золотников юлташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Иван Ильич **Золотников** юлташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти сентябрĕн 23-мĕшĕ

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăрту сарăлсах пырать

Чечеткин юлташ директор пулса тăракан фабрикăри рабочисемпе инженерла-техникла работникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн продукци кăларас плана ÿстерчĕç. Фабрика сентябрь уйăхĕн планне паянхи кун тĕлне 102 процент тултарнă.

Фабрикăри рабочисем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухса договорсем туса çирĕплетрĕç. Кашни рабочи хăйĕн нормине кулленех 140 процентран кая мар тултарса пыма обязательство илчĕ. Илнĕ обязательствăна халь бригадăсем ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче Е. Овчинникова, Солдатченкова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем хăйсен планне 150—160 процент тултарчĕç. Уйрăм работницăсем Василевская, Шмобикова тата ыттисем те кашни кунхи нормăна 150—160 процент тултарса пыраççĕ.

Уяв умĕнхи ăмăрту сарăлсах пырать.

А. КАПРАЛОВА,
Фабрикăри парторганизацин секретарĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿсрĕ

Черничкин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри рабочисем, Ленин ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ завод коллективĕн чĕнĕвне сÿтсе явнă хыççăн Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса уяв тĕлне çулталăк планне 100 процентчĕпех тултарма обязательство илчĕç. Ăмăртун малтанхи кунĕсенчех нумай рабочисем кулленхи нормăсене ик-виçĕ хут ÿстерсе тултарма тытăнчĕç.

Инструментсен цехĕнче ĕçлекен токарь Г. Касянов малтанхи вăхăтсенче нормăна 230 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, халь вăл хăйĕн нормине кашни кунах 250 процентран кая мар тултарса пырать. Ку цехра ĕç нормине тултарайман рабочисем çукпа пĕрех. Цех хăйĕн заданине кулленех 200 процент тултарать.

К. Мореплавцева юлташ штамповочнăй цехра ĕçлет. Вăл иртнĕ кунсенче нормăна 280 процент таран тултарса ĕçлетчĕ. Социализмлă ăмăртăва тухса, çĕнĕ обязательствăсем илнĕ хыççăн, вăл ĕç тухăçлăхĕпе унăн пахалăхне нумай ÿстерчĕ. Хальхи вăхăтра Мореплавцева юлташ кулленхи нормăна 300 процентран кая мар тултарса ĕçлет.

Н. КИРИЛЛОВ,
Завком председателĕн заместителĕ.

Пирĕн ĕçсемпе малашнехи обязательствăсем

ВĂРНАР. Леспромхозăн коллективĕ тата вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе çак леспромхозра ĕçлекен Вăрнар, Калинински тата Шăхасан районĕсенчи колхозникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

чугунçул транспорчĕ валли виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлес плана октябрĕн 1-мĕшĕччен вутă касас енĕпе 115 процент, турттарас енĕпе 140 процент тултармалла;

чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тата турттарас задание Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле—ноябрĕн 7-мĕшне—100 процентчĕпех пурнăçа кĕртмелле;

тăваттăмĕш кварталти плана пур тĕрлĕ ĕçсем тăрăх та ноябрĕн 7-мĕшне 50 процент пурнăçламалла, çулталăкри плана декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

Вĕсем республикăри вăрман хатĕрлевĕн организацийĕсене, рабочисемпе работницăсене, вăрман касса турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсене пурне те Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнма чĕнеççĕ.

Социализмлă ăмăртса ĕçлессине анлăн сарнипе Вăрнар леспромхозĕ чугунçул транспорчĕ валли виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлес плана сентябрĕн 15-мĕш тĕлне 106 процент тултарчĕ. Вăрнар, Калинински тата Шăхасан районĕсенчен вутă касса хатĕрлеме тата турттарма пынă колхозниксемпе колхозницăсем, социализмлă ăмăртса ĕçленипе, кашниех кулленхи нормăсене ирттерсе тултарса пыраççĕ. Вĕсем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеççĕ.

Е. САЗОНОВ,
Вăрнар леспромхозĕн директорĕ.

Чугунçула хĕле хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăх

Вунăкунлăха ĕççыннисене нумайрах хутшăнтармалла

Фронтовой вунăкунлăхăн малтанхи кунĕсенче Хусан чугунçулĕн 5-мĕш дистанцинче Канаш хулин ĕççыннисем тăрăшса ĕçлени палăрчĕ. Вĕсем пĕрремĕш кунта 120 погоннăй метр, иккĕмĕш кунĕнче 150 погоннăй метр тăршшĕ линие хăпартса юсанă. Вăрмар районĕнчен чылай колхозниксем чугунçул çинче ĕçлеççĕ.

Вунăкунлăха хутшăнса, 17-мĕш дистанцинчи пĕрремĕш околодокри железнодорожниксем (çул мастерĕ Козлов юлташ) 30 кубла метр çапă касса хатĕрленĕ, халĕ çав çапăран щитсем авса çыхаççĕ. Сентябрĕн 23-мĕшĕнче çак ĕçре 30 çын ытла ĕçленĕ. Çавăн пекех пиллĕкмĕш околодокра та (çул мастерĕ Курепин юлташ) железнодорожниксем чугунçула хĕллене хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлени палăрать.

Çапла вара уйрăм участоксенче чугунçула вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре ĕçлемешкĕн лайăх хатĕрлесе çитерме тытăннă. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, вунăкунлăха ирттерессине паянхи кунччен те кирлĕ пек организацилемен-ха. Чугунçул çинче ĕçлеме колхозсенче фронтовой бригадăсем тăвас, колхозниксене вунăкунлăха хутшăнтарас тĕлĕшпе партипе советăн вырăнсенчи (территориальнăй) организацийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. 17-мĕш дистанцире сентябрĕн 21-мĕшĕнче колхозсенчен пĕр çын кăна (Красноармейски районран) ĕçленĕ. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче 15 çын (Шăхасан районĕнчен) пулнă. Ишлей тата Çĕрпÿ районĕсенчи колхозсенчен чугунçул çинче ĕçлеме пĕр çын та тухман. Çакăнтан ĕнтĕ ку районсенчи колхозсемпе ялсоветсен председателĕсем, партипе комсомол организацийĕсем колхозниксене чугунçулăн фронтовой вунăкунлăхне хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн те туманни курăнать.

Калас пулать, железнодорожниксен представителĕсем ялсовечĕсене пырсан, вĕсене «паян пирĕн пурте ытти ĕçсенче; сирĕн патра ĕçлеме ыран çынсем уйăрса яратпăр», тесе ответлекен колхоз председателĕсем чылай. Анчах тепĕр кунне те çав колхозсенчен çынсем пымаççĕ. Ку ĕç çине çавăн пек ответсăрлăхпа пăхнине, панă сăмаха пурнăçа кĕртменнине нимĕнпе те тÿрре кăларма çук. Сăмах патăн, ăна пурнăçа кĕрт — çакăн пек ĕçлемелле пирĕн паян.

Уйрăм станцисемпе разъездсен руководителĕсем те хĕллене кĕме хатĕрленес ыйтăва кирлĕ пек какламаççĕ-ха. Шупашкар станцийĕнче (начальникĕ Подгорный юлташ), сăмахран вокзал çуртне юсассине питех те вăраха янă. Ку ĕçе августăн 15-мĕшĕччен туса пĕтерме палăртнă пулнă, анчах ăна паянччен те туса пĕтермен. Вокзал умне асфальт сармалла. Ку ĕçе тытăнман та. Станци начальникĕ Подгорный юлташ вокзал умĕнчи платформăна асфальт сарса якатасси вăл урăх организаци ĕçĕ тесе, ку ĕçе хăвăртрах тутарассишĕн тимлесе ĕçлемест.

Чугунçулсене хĕлле ĕçлеме хатĕрлемелли вунăкунлăха ирттерес ĕçре паян ыранах татăклă улшăну тăвас пулать. Чугунçул станцийĕсемпе дистанцийĕсен руководителĕсен вунăкунлăхра пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме железнодорожниксене, килхуçи хĕрарăмĕсене нумайрах хутшăнтарма, вунăкунлăхра тума палăртнă ĕçсене вăхăтра пурнăçлама пĕтĕм вăя пухма тăрăшмалла. Партипе советсен вырăнти организацийĕсен хуласемпе ялсенчи ĕççыннисене чугунçул çинче ĕçлеме явăçтарас ĕçе çине тăрса туса пырас пулать, хăш хуларан, хăш ялтан миçе çын, миçе лав ĕçлеме тухнине кашни кунах тĕрĕслесе тămалла.

Чугунçул çинче ĕçлеме ĕççыннисене нумайрах хутшăнтарса, вунăкунлăхра тума палăртнă ĕçсене пурне те туса çитермелле.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уяв парнисем

КÿКЕÇ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. **(Телефонпа).** «Молния» колхоз членĕсем пĕтĕм республикăри колхозсене, колхозниксемпе колхозницăсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем ярса пама чĕнсе каланине районри ытти колхозсем те ырласа йышăнаççĕ. Заводской ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 5 килограмм çу, 30 килограмм аш-какай, 300 килограмм çĕрулми ярса пама йышăнчĕç.

«Молния» колхозăн чĕнĕвне Иккасинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем те хапăл туса йышăнчĕç. Вĕсем боецсем патне 10 килограмм çу, 50 килограмм аш-какай ярса параççĕ. Çавăн пекех «Трактор», Ильич ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне уяв ячĕпе паха парнесем ярса пама хатĕрленеççĕ.

Хусан чугунçулĕ çинче мала тухнă вокзал

Канаш станцин вокзалĕ — Хусан чугунçулĕ çинчи чи лайăх ĕçлекен вокзал. Унăн коллективĕ виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ Хусан чугунçулĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

— Хĕрлĕ ялава малашне те хамăр аллăран вĕçертместпĕр, — тет вокзал начальникĕ инженер Николай Казимирович Гавриков юлташ.

Вăл — ĕçе ăста пĕлекен командир. Вокзал коллективĕ железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче малашне те малти вырăнтах юлассишĕн пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса кĕрешет.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту вокзал коллективĕнче вуншар стахановецсемпе ударниксене çитĕнтерчĕ. Халĕ вокзалта ĕçлекен 63 çынран 50-шĕ стахановецсемпе стахановкăсем, 7-шĕ ударниксемпе ударницăсем. Вĕсенчен 6-шĕ çеç, вокзала çĕнĕрен ĕçлеме кĕнĕскерсем, стахановецсемпе ударниксен ретне тăрайман-ха.

— Эпир вĕсене те кĕçех малтисен ретне тăрататтăмăр. Вара пирĕн коллектив малта пыракан коллектив çеç мар, стахановла коллектив пулса тăрĕ, — тет Гавриков юлташ.

Билетнăй кассирсем В. Гришенков, комсомолка А. Осина юлташсем, вокзал дежурнăйĕсем О. Боровикова, А. Спиридонова тата Ф. Цапина юлташсем, вокзал начальникĕ Н. Гавриков, унăн заместителĕ, вăлах вокзалти ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Л. Згурская юлташсем Аландин меслечĕпе ĕçлеççĕ.

Поездсем çĕнĕ расписани тăрăх çÿреме пуçласан, билетнăй кассир Василий Гаврилович Гришенков хăйпе ăмăртакан кассира — Анна Александровна Осинăна çапла сĕнÿ панă: пирĕн пассажирсене кĕтсе илме — инçете çÿрекенсен билечĕсене Совет Союзĕнчи паллă кассир Аландин меслечĕпе вагонсем çинчех компостировани тума тытăнас пулать. Çакăн пек туни хамăршăн та, пассажирсемшĕн те усăллă.

Кассир комсомолка Анна Осина ку сĕнĕве ырласа йышăннă. Ĕç хыççăн, канмалли вăхăта пăхмасăрах, вăл Канаш — Шупашкар, Канаш — Çĕмĕрле тата Канаш — Улатăр хушшинче çÿрекен поездсем çине билетсем сутма, инçете каякансен билечĕсене компостировани тума çÿренĕ. В. Гришенков та ку ĕçе тимлĕн туса пынă. Лайăх ĕçленĕшĕн Гришенков юлташа Хусан чугунçулăн управленийĕ нумай пулмасть Хисеплĕ грамотăпа наградăланă.

Ÿкерчĕк çинче: Т. В. Васильев—Канаш станцин вокзалĕнче ĕçлекен паллă стахановец—чи лайăх грузчик. Васильев юлташ чугунçул çинче 40 çул ытла ĕçлет.



Ÿкерчĕк çинче: С. Д. Бурмистрова—Канаш станцин вокзалĕнчи чи лайăх стахановка. Вăл унта çăмăл багажсене усрамалли камерăра кладовщица пулса ĕçлет.

Вокзал дежурнăйĕсенчен уйрăмах Ольга Яковлевна Боровикова юлташ лайăх ĕçлет. Вăл пассажирсен ыйтăвĕсем çине çийĕнчех ответлет, вĕсене каймалла çĕре хăвăртрах лартса ярассишĕн тăванла тăрăшать, аманнă тата отпуска таврăнакан боецсемпе командирсене хăй билетсем илсе парать, вагонсем çине ларма пулăшать. Боровикова юлташ ĕçрен пушансан та вокзалтан час тухса каймасть, пассажирсене багажсем илме пулăшать, вокзала юсанă çĕрте ĕçлет. Çавăнпа ăна пассажирсем те, вокзалта ĕçлекенсем те хисеплеççĕ.

Паллă стахановец грузчик Трофим Васильевич Васильев юлташ чугунçул транспортĕнче 40 çула яхăн ĕçлет. Вăл Канаш станцин вокзалĕпе пĕрле ÿснĕ. Унăн мухтавĕ те вокзал ĕçĕсемпе пĕрле ÿссе пынă. Чугунçул транспортĕнче çур ĕмĕре яхăн ĕçлесе вăл патриотла ĕçсем сахал мар тунă. Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан, вăйпитти грузчиксем фронта тухса кайнă. Трофим Васильевич хăйĕн юлташĕсене фронта ăсатнă та хăй фронтри пек ĕçлеме пуçланă. Халĕ вăл икĕ çыншăн ĕçлет. Ĕçре примерлă пулнăшăн ăна темиçе хутчен те тав тунă, премисем панă.

Çăмăл багажсене усракан камерăн кладовщици Серафима Дмитриевна Бурмистрова юлташ пассажирсене ырă кăмăлпа кĕтсе илет, вĕсен багажĕсене хăвăрт йышăнса тăрать. Стахановла ĕçленĕшĕн ăна Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри Кунĕ ячĕпе Хусан чугунçулĕн Управленийĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ — 200 тенкĕ парса премиленĕ. Мухтава тивĕç стахановецсемпе ударниксене татах та илсе кăтартма пулать.

Çакăн пек мухтава тивĕç стахановецсемпе стахановкăсене кулленхи ĕçре вокзал начальникĕ Гавриков юлташ, унăн заместителĕ Згурская юлташ хавхалантарса ертсе пыраççĕ. Вокзалра ĕçлекенсем тата пассажирсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван организациленĕ. Июльпе август уйăхĕсенче 100 ытла калаçусем, 50 лекци, 45 политинформаци ирттернĕ. Государство укçа-тенкисене ытлашши расходламасăрах, вокзал коллективĕ халĕ 1942—1943-мĕш çулхи хĕле хатĕрленсе çитнĕ. Вокзал çуртне унти сĕтел-пукансене ремонтласа пĕтернĕ. Вокзал çывăхĕнчи чугунçул линийĕсене, площадкăсене ремонтланă. Çак кунсенчех вокзал çуртне ăшă ытларах тытмалла туса çитереççĕ, чÿречесене икшер хут лартаççĕ.

Иртнĕ çул, уйрăмăнах хĕл кунĕсенче, шыв вĕретмелли баксем шăтăк пулнипе тата вутă пулман пирки пассажирсем валли вĕретнĕ шыв çителĕксĕр пулнă. Кăçал ку çитменлĕхе урăх тăвас мар тесе шыв вĕретмелли баксене тĕплĕн ремонтланă, вутă та çителĕклĕ хатĕрленĕ. Хĕл каçма пурĕ 750 кубометр ытла вутă кирлĕ. Вокзал коллективĕ сентябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 800 кубометр ытла вутă хатĕрленĕ, ку ĕçе малалла та туса пыраççĕ. Вокзала хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем паха ĕçсем турĕç. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, комсомолăн хулари организацийĕ пулăшнипе, фронтовой вунăкунлăх ирттернĕ. Çав вунăкунлăхра ĕçрен пушаннă железнодорожниксем 200 çын ытла вокзала ремотланă çĕре хутшăннă. Носильщиксем Потаповăпа Панкратова юлташсем, уборщица Гуськова юлташ тата перрон çинчи контролер Угарова юлташсем ку ĕçре уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартнă. Канашри сĕтел-пукансем тăвакан фабрикăри комсомолецсемпе çамрăксем вокзалти мĕнпур сĕтел-пукансене ремонтласа панă.

Çак вунăкунлăх хушшинче союзра тăман 4 çамрăк — О. Боровикова, Борохова тата Лидăпа Лиза Яховăсем комсомола кĕме заявлени панă. Вокзал коллективĕ тунă çитĕнÿсем чăнах та пысăк. Анчах вĕсемпе лăпланса ларни — пысăк йăнăш туни пулĕччĕ. Умра вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕл. Канаш станци вокзалĕн коллективĕ хăйĕн ĕçне çитес хĕлĕн йывăр условийĕсенче те йĕркеллĕн туса пымалла.

П. НИКОЛАЕВ.
КАНАШ ХУЛИ («Чăваш Коммуни» корр.).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче хаярран çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Хулан кăнтăр хĕрринче противник пехотин икĕ полкĕ наступлени пуçласа янă. Гварди майорĕ Никонов юлташ командир пулса тăракан гвардейски минометнăй часть наступлени тăвакан гитлеровецсем çине темиçе хутчен харăс персе нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн атакине путлантарнă. Тепĕр участокра хаяр çапăçу хыççăн тăшман икĕ урам йышăнса илнĕ. Пирĕн подразделенисем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлернĕ, 10 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 9 автомашинине, 3 орудине, 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă, тăшмана пысăк сухату кўнĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, икĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çын таран вĕлерсе тăкнă, 20 танк, артиллерин 4 батарейине, минометсен 12 батарейине, 21 оруди, 8 миномет, 27 пулемет, тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 45 автомашина пĕтерсе тăкнă. Пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен 12 самолетне персе антарнă. Н-ски часть противник танкĕсен атакине сирсе янă, çавăн чухне нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă. Артиллери дивизионĕ, Гарбар юлташ командир пулса ертсе пынипе, противникăн 7 танкне тата артиллерин пĕр батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе тата мотопехотипе çапăçнă. Кононеко юлташ командир пулса ертсе пыракан батарея гитлеровецсен атакине сирсе янă, нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Бронебойщик Кисловский юлташ противотанковăй пăшалпа персе тивертсе тăшманăн танкне сиенленĕ. Пĕр высотăшăн пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен автоматчикĕсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чăсĕсем противникăн атакисене сире-сире янă. Пĕр участокра пирĕн артиллери тăшманăн 4 орудине пĕтерсе тăкнă тата минометсен 3 батарейипе артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă. Краснофлотецсен разведка ушкăнĕ каçхине Новороссийскран хĕвеланăçнерехри района пырса катерсем çинчен аннă. Вĕсем часовойсене пĕр сас-чĕвĕсĕр вĕлерсе пĕтернĕ те, çуртсене çавăрса илсе, румынсен 60 салтăкне çити тата икĕ офицерне пĕтерсе тăкнă. Разведка ушкăнĕ пĕр çухатусăр хăйĕн базине каялла таврăннă. Тинĕспе пынă чухне противникăн мотоботне путарнă.

* * *

Синявино районĕнче гитлеровецсен пысăк вăйĕсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла туртса илес шутпа атака пуçласа янă. Каç енне пирĕн чăсĕсем нимĕçсен атакине вĕсене пысăк çухатсем кўрсе сирсе янă. Совет летчикĕсемпе зенитчикĕсем фронтăн çак участокĕнче нимĕçсен 10 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен подразделенине сасартăк тапăннă. Пуçланса кайнă тытăçура партизансем 25 гитлеровеца вĕлернĕ тата икĕ грузовика çунтарса янă. Тăшманран пĕр автомашина, 4 пулемет, 38 винтовка тата 5.000 патрон тытса илсе партизансем тарса çухалнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи Павлово ялĕнчи хресчен П. В. Бережков фронт линийĕ урлă каçса пирĕн чăсĕсем тăракан вырăна пынă. Вăл фашистсем оккупациленĕ районсенче пурăнакан совет гражданĕсен йывăр кунçулĕ çинчен каласа панă.

«Нимĕçсем,—тенĕ вăл,—пирĕн яла саранча пек çаратса пĕтерчĕç, ялти халăха çаппа-çарамас, çарран тата пĕр чĕлĕ çăкăрсăр тăратса хăварчĕç. Хĕлле çынсем шыçа-шыçа кайса выçă вилĕмпе пĕтрĕç. Çуркунне нимĕç влаçĕсем хресченсене уйхирсене пĕтĕмпех акса хăварма ўкĕтлерĕç. Вĕсем çапла каларĕç: кĕркунне, пуçтарса илнĕ тырра кăштах нимĕç çарĕсем валли парсан, ытти тырă пĕтĕмпех хресченсене хăйсене юлать, терĕç. Уйрăм хресченсем, гитлеровецсен сăмахĕ хыççăн кайса, темиçешер гектар акса хăварчĕç. Ытти колхозниксем çурт таврашĕнчи участоксене кăна акрĕç. Тырă пулса çитсен, нимĕçсем хресченсен уйĕсенчи тырпула пĕтĕмпех нимĕç çарĕн харпăрлăхĕ тесе пĕлтерчĕç. Персе пăрахассипе хăратса, вĕсем хресченсене пĕтĕм тырпула вырса пуçтарма тата çапса пĕр пĕрчĕ хăвармиччен нимĕç влаçĕсене пама хушрĕç. Пирĕн ялти хресченсем çав приказа пурнăçа кĕртме пачах килĕшмерĕç. Вара пирĕн пата карательнăй отряд пырса çитрĕ те пире хаяррăн тыткаларĕ. Федот Ручьев, Петр Кожемякин, Иван Багров, Анна Павлова, Николай Кушаев колхозниксене тата ыттисене те фашистла ирсĕрсем персе пăрахрĕç, пĕтĕм яла йăлтах çаратса тухрĕç, унтан пĕтĕм яла тĕппипех çунтарса ячĕç».

Сентябрĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерўрен

Сентябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хĕрўллĕ çапăçусем пынă. Уйрăм урамсемпе çуртсем темиçе хутчен аларан алла куçаççĕ. Пĕр участокра противникăн 100 танкĕ ытла пулăшса пынипе çапăçакан пехоти пирĕн чăсĕсене каялла чакарса темиçе урама тытса илме пултарнă. Ытти участоксенче противникăн пур атакисене те сирсе янă. Хулан çурçĕр районĕнче пирĕн боецсем нимĕçсен 6 танкне, 14 автомашинине тата 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Н-ски чăсăн танкистĕсем хаяррăн çапăçса нимĕçсен 11 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, 7 противотанковăй оруди, 12 автомашина тата нимĕçсен пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри пĕр участокра нимĕçсем темиçе хаяр контратака тунă. Пирĕн войскăсем противникăн пур атакисене те сирсе янă, нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн чăсĕсем противника каялла чакарнă та пĕр паха çула йышăннă. Н-ски гвардейски часть гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, минометсен 4 батарейине, пĕр йывăр танк тата 8 противотанковăй оруди пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче противникăн танкĕсемпе тата автоматчикĕсемпе çапăçнă. Нимĕçсен 40 танкĕ автоматчиксен десанчĕпе пĕрле пирĕн Н-ски стрелковăй часть хўтĕлекен позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакине сирсе янă, нимĕçсен 8 танкне тата противникăн çĕр автоматчикне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери юлашки виçĕ кун хушшинче тăшманăн 19 дзотне тата 10 блиндажне çĕмĕрнĕ, противникăн 2 орудине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн снайперсем тата, разведка тăвакан группăсем активлăн кĕрешсе гитлеровецсен 200 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. Ленинград патне пымалли вырăнсенче пирĕн летчиксемпе зенитчиксем нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши виçĕ самолетне персе ўкернĕ. Противникăн тăваттăмĕш самолетне кĕçĕн сержант Опиенко юлташ винтовкăпа персе ўкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 129-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 430-мĕш полкĕн 2-мĕш батальонĕнчен Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче тыткăна параннă обер-ефрейтор Фриц Лангенен çапла каласа панă: «Сентябрь пуçланнă тĕле пирĕн батальон йăлтах халсăрланса çитрĕ. Ротăсенче 15 çынтан пуçласа 40 çынна çити çеç юлчĕ. Сентябрĕн 9-мĕшĕнче батальона пĕтĕмпех аркатса тăкрĕç. Çав кун пирĕн ротăна пĕтерсе хучĕç. Вырăссем иртен пуçласа пирĕн позицисене артиллерипе пеме тытăнчĕç. Рота командирĕ обер-лейтенант Этман подкреплени пырса çитиччен, икĕ сехет хушши, тытăнса тăма хушрĕ. Анчах та салтаксем чăтса тăраймарĕç, чупса кайрĕç. Вĕсем пăр пек çăвакан пульăсемпе снарядсем леккипе пурте тенĕ пекех пĕтрĕç. Эпĕ 4 салтакпа пĕрле хамăн пурнăçа çăлса хăварма шут тытрăм. Эпир окопрах юлтăмăр, унтан, красноармеецсем пырса çитсен, хĕçпăшалсене пăрахрăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем оккупациленĕ совет районĕсенчи мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. Сентябрĕн малтанхи кунĕсенче Одесса облаçĕнчи Первомайск хулин коменданчĕ нумай çынна хăйсене кирлĕ япалисене тата виçĕ кунлăх продуктсем илсе комендатура патне пыма хушнă. Кăтартнă срокра комендатура патĕнче 200 çынна яхăн пухăннă. Нумай хĕрарăмсем хăйсен ачисене илсе пынă. Гестаповецсем пухăннă çынсене хула тулашне, танксемпе кĕрешме тунă канавсем патне илсе тухнă та, персе пăрахнă.

* * *

Нимĕç оккупанчĕсем Чехословакире хăйсем пуçпулса тăма пуçланăран вара чех интеллигенцийĕн темиçе пин представительне асаплантарса, персе вĕлернĕ. Нумаях пулмасть Прагăра гестапăн тĕрмисенче 86 учителе персе вĕлернĕ. Инглава сывăхĕнчи концентрациллĕ лагерьте чехсен учителĕсемпе журналисчĕсем тата профессорĕсем 500 çынна яхăн султалăк ытла ĕнтĕ асапланса пурăнаççĕ. Выçăпа тата чирлеснипе çав лагерьте 6 уйăх хушшинче кăна 150 çын вилнĕ. Нимĕçсем çавăнта хупнă чехсене тĕрлĕ майпа мăшкăллаççĕ, хăйсен чĕлхипе калаçма чарнă.

Республикăри колхозсенче тырă вырас, кĕлтесене капана хывас, авăн çапас, çĕрулми кăларас ĕçсем сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Тырă вырнă	Кĕрпе тумалли тата пăрçа йышши тырăсене вырнă	Кĕлтесене капана хывнă	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă
Улатăр	100	80,7	83,1	39,1	60,4
Элĕк	100	100	95,9	51,8	69,2
Вăрнар	100	100	98,2	47,1	51,9
Йĕпреç	100	98	99,3	54,2	49,6
Иншей	100	100	91,4	60,3	72,8
Калинински	100	100	99,7	40,0	61,2
Канаш	100	98,3	97,7	56,4	79,1
Комсомольски	100	98,2	100	50,9	68,4
Красноармейски	100	100	96,9	75,1	24,1
Хĕрлĕ Чутай	100	94,7	96,4	46,2	75,2
Сĕнтĕрвăрри	100	94,3	93,5	50,3	59,7
Октябрьски	100	99,1	97,6	46,6	61,8
Первомайски	100	100	78,6	49,3	29,0
Пăрачкав	100	87,6	100	59,3	25,2
Советски	100	100	99,0	38,8	54,6
Сĕнтĕр	100	100	99,3	57,6	51,5
Вăрмар	100	89,3	95,6	53,6	57,8
Çĕрпў	100	100	99,3	55,5	36,0
Шупашкар	100	100	96,7	62,9	67,5
Чкаловски	100	93,1	97,1	41,2	82,0
Шăмăршă	100	100	100	62,0	63,3
Шăхасан	100	100	92,6	53,8	70,9
Çĕмĕрле	100	98,6	99,7	56,3	84,9
Етĕрне	100	94,4	100	52,9	59,6
Елчĕк	100	90,9	90,4	39,8	85,1
Тăвай	100	90,7	94,7	46,9	90,0
Куславкка	99,2	84,7	78,8	48,7	33,8
Кувакино	99[illegible]	7[illegible]3	84,0	49,1	33,9
Шупашкар хули	100	100	100	49,4	66,0
ЧАССР тăрăх	99,9	95,0	94,9	51,4	59,2
Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă	99,8	91,3	87,2	46,5	31,3

Кĕлтесене алăпа йăтса капана хывас ĕçе организацилемен

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Районра малта пыракан колхозсем кĕлтесене капана хывнă май, авăн çапас ĕçсене те авăн организациленĕ. Ямантари «Майăн 1-мĕшĕ», Шĕкĕрти «Акатуй» колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç.

Анчах та районри чылай колхозсем кĕлте кўрес тата авăн çапас тĕлĕшпе пăх ĕçлеççĕ-ха. Матьшўри «Молодой колхозник», Питикассинчи Сталин ячĕпе тăракан, Уйкас Кипек ялсоветĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем иртнĕ çулта уйхир ĕçĕсене кая юлса вĕçлерĕç. Кăçал та вĕсем иртнĕ çулхи çитменлĕхсене шута илмен, ĕçре чăтма çук кая юлса пыраççĕ. Çак асăннă колхозсем кĕлтесене 35—40 процент çеç кўнĕ, авăн çапас плана та 30—32 процент кăна пурнăçланă.

Районĕпе илсен те кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕç çителĕксĕр пурнăçланса пырать. Районри 67 колхозран 38 колхоз çеç кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ, 12 колхоз авăн çапас ĕçсене вĕçленĕ. Вырнă тырăсене капана хывас ĕç начар пырать пулин те, колхозсенче кĕлтесене алăпа йăтса капана хывассине массăллăн туса пымаççĕ. Инçе уйри кĕлтесене вырăнтах йăтса капана хывасси çинчен ВКП(б) райкомĕ колхозсене темиçе хутчен асăрхаттарнă, анчах колхоз председателĕсем ăна пурнăçа кĕртмеççĕ.

С. ШАДИН.

Дисциплина çук çĕрте

СĔНТĔР. (Телефонпа). Районри колхозсен план тăрăх 17.408 гектар çинчи кĕлтесене кўрсе капана хывмалла. Сентябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне мĕнпурĕ 17,298 гектар çинчи кĕлтесене кўрсе капана хывнă.

Малта пыракан колхозсем ĕçе тĕрĕс организациленĕ май, тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртрĕç. «Наука», «Свобода» тата ытти колхозсем пур культурăсене те çапса, пуçтарса кĕртрĕç. Çак вăхăтрах «Родина» тата Жданов ячĕпе тăракан колхозсем кĕлте кўрес ĕçре питĕ начар ĕçлеççĕ. «Родина» колхоз паянхи куна çитсе те кĕлтесене 50 процент çеç кўрсе капана хывнă, çĕрулми кăларма тытăнман. Çак икĕ колхозра ĕç вăйне тĕрĕс организацилемен, колхозниксем хушшинче дисциплина çук. Нумай колхозниксем хăйсен кулленхи ĕç нормисене тултарса пымаççĕ.

Ф. РОДИОНОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Сталинград районĕнчи çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Сталинград районĕнчи çапăçусем юлашки кунсем хушшинче уйрăмах хаярланнă. Нимĕçсем, нимĕнле çухатусем тўснине пăхмасăрах, пирĕн чăсĕсене хирĕç çапăçăва çĕнĕрен çĕнĕ резервсем кĕртсе яраççĕ.

Уйрăм участоксенче пирĕн чăсĕсем тăшманпа активлăн кĕрешеççĕ. Н-ски часть, танксемпе, артиллерипе тата авиаципе пĕрле пулса, нимĕçсене атакăланă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсем патне сывхарса пынă чухне, фашистсем, минометсемпе пулеметсенчен персе, пирĕн пехотинецсене чарса лартма, вĕсене танксенчен уйăрма хăтланнă. Анчах та вĕсем çавна пурнăçа кĕртме пултараймаи. Вырăнĕ-вырăнĕпе штыкпа тăрса хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн боецсем кăнтăрла тĕлĕнче пĕр усăллă высотăна йышăнса илнĕ.

Тăшман фронта инçетри районсенчен илсе килекен резерври чăсĕсен атакисене совет воинĕсем ăнăçлăн сире-сире пăрахаççĕ.

Капитан Дрягин командир пулса ертсе пыракан подразделенири гвардеецсем тăшмана хирĕç темиçе кун хушши ĕнтĕ çавтери вăйлăн кĕрешеççĕ. Тăшман çапăçăва танксемпе авиаци тата артиллери нумай кĕртсе янă пулин те, гвардеецсем тăшмана малалла яман. Наступлени тăвакан танксене сирсе пăрахас тесе, вĕсем хăйсен мĕнпур вăйĕсене, хăйсен çапăçури пĕлўлĕхне хунă. Темиçе кун хушшинчи çапăçусенче совет боецĕсем нимĕçсен вуншар чăсĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă.

Воронеж районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Воронеж районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн чăсĕсем тăшманăн контратакисене сире-сире пăрахаççĕ, тăшмана пысăк сиен кўреççĕ. Воронежран çурçĕр енчи вырăнта Н-ски подразделени боецĕсем, халăх пурăнакан пĕр пункта çĕмĕрсе кĕнĕ те, тăшманăн икĕ батальонĕ тунă тăватă контратакăна сирсе пăрахнă, трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Темиçе кун хушшинчи хĕрўллĕ çапăçусенче пĕр участокра кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 3.000 çынна çити вилсе пĕтнĕ.

Ытти участоксенче те нимĕçсен контратакисене, вĕсене пысăк çухату кўрсе, сире-сире пăрахнă. Пирĕн боецсем хăйсем йышăннă рубежсене пур çĕрте те çирĕппĕн тытса тăраççĕ. Тăшмана çапăçу хирĕнче атакăланă пирĕн авиаци фашистсене пысăк сиен кўнĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Воронеж районĕнче кăвак çутăпа пуçласа сĕм тĕттĕмччен артиллери кĕрлевĕ лăпланмасть. Сывлăшра вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн летчиксем тăшманăн укреплениĕсене вăйлăн аркатаççĕ, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Çапăçусенче танкистсемпе автоматчиксем хăйсене палăртрĕç. Совет танкĕсен ушкăнĕ, автоматчиксемпе пĕрле, халăх пурăнакан пункта çĕмĕрсе кĕнĕ. Тупăсемпе персе, танксен гусеницисемпе таптаса, совет воинĕсем нимĕçсен орудине, темиçе пулеметне стройран кăларнă тата дота ишĕлтернĕ. Урамри çапăçусенче совет автоматчикĕсем, танкистсем пулăшса пынипе, гитлеровецсен ротине вĕлерсе пĕтернĕ.

Воронежран кăнтăр енче те çапăçусем лăпланма пĕлмеççĕ.

Ют çĕршывсенче

Аргентинăра фашизма хирĕç пухнă митинг

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Буэнос-Айресра Аргентинăри чи пысăк стадионра митинг пулса иртнĕ. Митинга Бразилия Германипе Италие хирĕç вăрçă пуçласа янине Аргентина халăхĕ ырланине палăртма организациленĕ. Митинг тĕнĕл держависене хирĕç пыракан вăрçă тĕлĕшпе Аргентина халăхĕ Бразили халăхĕпе пĕр кăмăллă пулса тăнине авăн кăтартнă. Митингра 30.000 çын пулнă. Митинга пухăннă халăх Бразили президентне саламлă телеграмма янă. Телеграммăра пуринчен ытла çак сăмахсем палăрса тăраççĕ: «Германи фашизмĕ тапăннине хирĕç пыракан ĕçре Аргентина халăхĕ Бразили халăхĕпе пĕр кăмăллă» — тенĕ.

Англири тинĕс-çар строительстви

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англия тинĕс-çар карапĕсем тĕлĕшпе тўснĕ хăйĕн çухатăвĕсене халь ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех витнĕ. Вăрçă пуçланнăранпа Англи флочĕн 4 линкор, пĕр линейнăй крейсер, 5 авианосец, 24 крейсер, 80—90 эсминец тата 38 подводнăй лодка пĕтнĕ пулнă.

Çĕнĕрен халĕ ĕнтĕ «Король Георг V» класĕнчи 2 линкор строя кĕнĕ. Вĕсен кашнин водоизмещенийĕ 35.000-шер тонна. Çавăн пекех тата «Илластриос» класĕнчи 4 авианосеца тата 5 крейсера туса пĕтернĕ тесе шутлаççĕ. Çав крейсерсене, 1939 çулăн пуçламăшĕнчех тума тытăннă. 17 крейсер çумне хушса, вăрçă пуçлансан тума тытăннă.

«Дейли геральд» хаçат шутланă тăрăх, Англин халĕ çĕнĕрен 200 эсминеца яхăн хутшăннă. Вăрçă пуçланнăранпа çавăн пекех тата 200 корвета яхăн туса пĕтерсе строя кĕртнĕ тесе шутлаççĕ.

Германи салтакĕсем пăлхав тума пăхнă

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Ивнинг стандард» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Киркенесри (Норвегия) концентрациллĕ лагере австриецсен 400 салтакне яхăн вăйлă хуралпа илсе пынă. Вĕсене нимĕçсен темиçе салтакĕпе пĕрле Финлянди фронтĕнче пăлхав тума хăтланнăшăн арестленĕ пулнă. «Пăлхавçăсенчен» кашни вуннăмĕш çынна персе пăрахнă, ыттисене каторгăллă ĕçе янă.

Çарти нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсене хăйсем вĕлересси те час-часах пулса пырать. Оппускран Нарвика таврăннă пĕр офицер хăйĕн юлташĕсене Германири лару-тăру çинчен каласа панă та кайран перĕнсе вилнĕ. Киркенесра эсэсовец Шмидт хăйĕн юлташне персе пăрахнă та унтан хăй те перĕнсе вилнĕ.

ФРАНЦУЗСЕНЕ ПАРИЖРАН МАССИ-МАССĂЛЛĂН КĂЛАРСА ЯНИ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Франци чиккинчен çапла пĕлтерет: нимĕçсен çар влаçĕсем Парижран Франци халăхне Силезири шахтăсенче ирĕксĕр ĕçлеттерме массăллăн кăларса яраççĕ. Французсене Силезие Германие хирĕçле тăнăшăн тавăрттăр тесе айăпласа яраççĕ.

МАДАГАСКАРТИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мадагаскарта вăрçакан Англи войскисем Анказобене йышăннă та кăнтăралла куçса пыраççĕ. Бриковиль районĕнче лару-тăру ним улшăнмасăрах тăрать.

ИНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Бомбейран пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 19-мĕшĕнче Бенгали провинцийĕнче хумханусем пулнă. Джамалпурта демонстрантсем полицейски участока, чугунçул станцине, почта çуртне тата ытти çуртсене те тапăннă. Документсене çунтарса янă. Нагпурта (центральнăй провинцисенче) Эмпресспа Моден завочĕсенчи паянхи кунччен забастовка тунă 22 пин рабочи забастовка тума пăрахса, предприятисенче ĕçлеме тытăннă.

КĔСКЕН

▲ Вăрçă пуçланнăранпа тĕнĕл держависем Бразилин 17 пароходне путарнă.

▲ Канадăра Лăпкă океан сыранĕнче çĕнĕ авиаци завочĕ лартнă. Завод часах серийĕ-серийĕпе самолетсем туса кăларма пуçламалла.

▲ Пичетре пĕлтернĕ тăрăх Америка çарĕнче халĕхи вăхăтра 4 миллион çын ытла тăрать.

▲ Англире ВС маркăллă «Спитфайр» истребителĕн çĕнĕ типне (тĕслĕхне) туса кăларнă. Ку йышши истребитель çинче тăватă 20 миллиметрлă тупă пур. Çавăнпа та унăн хĕçпăшалĕсем нимĕçсен «Фокке—Вульф—190» йышши истребителĕсен хĕçпăшалĕсенчен хăватлăрах. Шутланă тăрăх, çĕнĕ истребитель сехетре 640 километр таран кайма пултарать. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

И. П. Павлов ячĕпе паракан премисем

Совет Союзĕн Наукăсен Академийĕ вырăссен чаплă физиологĕ И. П. Павлов ячĕпе 20 пин тенкĕлĕх преми памалла туса унăн ятне ĕмĕр асра тытмалла туса хунă, çав премие кашни çул физиологи тĕлĕшпе тунă питех те чаплă ĕçсемшĕн памалла.

Наука Академийĕн президиумĕ кăçал 1941-мĕшпе 1942-мĕш çулсенче çырса пĕтернĕ научнăй ĕçсемшĕн икĕ преми памалла тунă.

Преми пама сĕнекен ĕçсене академик Орбели председатель пулса ертсе пыракан комисси пăхса тухать. И. П. Павлов ячĕпе паракан премие илмешкĕн совет ученăйĕсем те, ютçĕршывсен ученăйĕсем те хăйсен научнăй ĕçĕсене тăратма пултараççĕ. (ТАСС).

УЗБЕКИСТАН ВЫРĂНТИ ТОПЛИВĂПА УСĂ КУРМА ТЫТĂНАТЬ

Узбекистанăн тусем çинчи вăрманĕсенче вутă х[illegible]рлесе çитереççĕ. Вăйлă юхакан шывсем тăрăх улăхсене 50 [illegible] кубометр вутă юхтарнă та ĕнтĕ.

Ташкентри ĕççыннисемпе шкул ачисем, 50 пин çын ытла, пушă вăхăтра вăрман касаççĕ, тунката та кăлараççĕ, хĕл валли вутă хатĕрлеççĕ.

Узбекистан вăл яланах инçетрен илсе килекен топливăпа усă курнă. Халĕ вырăнти топливăпа усă курнипе, çав инçетрен илсе килекен топливăсăр пурăнма май пулса тăнă. (ТАСС).

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЕ ПУЛĂШНИ

Калинин облаçĕнчи Медновски районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз пуçарса янипе Калинин облаçĕнче Хĕрлĕ Çар нумаях пулмасть ирĕке кăларнă Погорельски тата Зубцовски районсенчи ĕççыннисене пулăшмалли движени анлăн сарăлса пырать. Çак ялхуçалăх артелĕн членĕсем, фашистла ирсĕрсем кўнĕ пур сурансене те тўрлетсе çитерейменн пулсан та, асап тўснĕ районсенчи халăхсене халех 3,5 тонна продуктсем яма тата пулăшу фондне 1942 çулхи тырпулран 3 процент уйăрса хума йышăннă. Калининецсем облаçри мĕнпур ĕççыннисене вĕсем пек тума чĕннĕ.

Малта пыракансем чĕннине облаçра хаваслăн йышăннă. (ТАСС).

ВИÇÇĔМĔШ ГРУППĂРИ ИНВАЛИДСЕНЕ ПАРАКАН ЛЬГОТĂСЕМ

Социальнăй обеспеченин оргăнĕсене производствăра тата учреждениссенче ĕçлекен виççĕмĕш группăри инвалидсене вĕсен ĕçукçийĕ кирек мĕн чухлĕ пулсан та пенси парса тăма ирĕк панă. Врачебно-трудовой экспертнăй комиссисем çырса парсан, предприятисемпе учреждениссен руководителĕсем ĕçлекен инвалидсене черетлĕ отпусксем пама пултараççĕ. (ТАСС).

ÇĔНĔ ПОЧТА МАРКИСЕМ

Çыхăну Халăх Комиссариачĕ çитес вăхăтра почта маркисен темиçе çĕнĕ серийĕсене кăларать. Вĕсенчен пĕри совет халăхĕ отечественнăй вăрçăра гитлерла захватчиксемпе çапăçнă ятпа тухать, тепри—вырăссен чаплă мореплавателĕ В. Беринг вилнĕренпе 200 çул çитнĕ ятпа тухать. Кашни серире тĕрлĕ ўкерчĕклĕ маркăсем пулаççĕ. Октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче Совет Союз Геройĕсен—Гастелло, Талалахин тата Доватор геройсен сăнĕсене ўкернĕ маркăсем çўреме пуçлаççĕ. (ТАСС).

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, **В. Г. Григорьев** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, **Ф. Т. Семенов** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО" (гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21), имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—6 Дирекция.

Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум
с 1 сентября переехал на улицу Калинина в школу № 3.

КУРСЫ СТЕНОГРАФИИ И МАШИНОПИСИ
объявляют прием на курсы.
Начало занятий 1 октября с. г.
Об условиях приема справиться по адресу: ул. Новая, д. № 22.
ДИРЕКЦИЯ.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ. Приметы: мерин, масть бурая, рост 133 см, кличка „Байкал", имела номер 27.
Знающих ее местонахождение просим сообщить Чебоксарской школе ФЗО № 11.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1378 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 24 п. н.